27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1944
СЕНТЯБРЬ
8
ЭРНЕКУН
177(6672) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем паян, сентябрӗн 6-мӗшӗнче, нимӗçсен НАРЕВ шывӗ çинчи оборонин тӗреклетнӗ пахa пунктне — ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçне штурмласа туртса илнӗ.

ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçне туртса илессишӗн пынӑ çапăçусенче ГОРБАТОВ генерал-полковникӑн, ГРИШИН генерал-лейтенантӑн, ЧУВАКОВ генерал-майорӑн, УРБАНОВИЧ генерал-майорӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорӑн, АВИЛОВ полковникӑн, КУБАСОВ генерал-майорӑн, ГРЕКОВ полковникӑн, СЛИЦ генерал-майорӑн, ВЕРЕВКИН полковникӑн, КОНОВАЛОВ полковникӑн, КИРИЛЛОВ генерал-майорӑн, ТАРАСОВ полковникӑн, МИХАЛИЦИН полковникӑн, НИКИТИН генерал-майорӑн, ГАСПАРЯН генерал-майорӑн çарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчӗн СЕМЕНОВӐН, ДЕРГАЧ полковникӑн, МИХНО полковникӑн, МАЛОФЕЕВ полковникӑн, РОЩИН полковникӑн, КОРЫТЬКО полковникӑн артиллерисчӗсем; АПАРИН полковникӑн, РАССКАЗОВ полковникӑн, ДАГИЛИС полковникӑн, ЗИРКА подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНӐН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТМАНӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКӐН, СМОЛОВИК полковникӑн, КАЗАЧЕНКО подполковникӑн, БЕРШАНСКАЯ майорӑн летчикӗсем; инженери çарӗсен генерал-майорӗн ЖИЛИНӐН, ШИТИКОВ полковникӑн, АРЦИШЕВСКИЙ полковникӑн саперӗсем; çыхăну çарӗсен генерал-майорӗн МИШИНӐН, ЖИЛЬЧЕНКО полковникӑн, НЫРКОВ капитанӑн, ЗАИЧКО капитанӑн, БОРИСОВ капитанӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ӗçсенчен ӗçӗсене уявлӑха паллӑртса хӑварас тесе, ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçне туртса илессишӗн пынӑ çапăçусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене «ОСТРОЛЕНКОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 6-мӗшӗнче, 21 сехетре хамӑр Тӑван çӗршыв столици МУСКАВ, çӗр çирӗм тӑвата тупăпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçне туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçнӗ ирӗке кӑларассишӗн пынӑ çапăçусенче пулнӑскерсене, пиӗ чаплӑ çапăçнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван çӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапăçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

1944 çулхи сентябрӗн 6-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 5-мӗшӗнче ТАРТУ хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ, тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк çухату тӳстернӗ.

ЛОМЖА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем ВЫШКУВ хулипе пысӑк чугун çул станцине тытса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапăçса, халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ, çав шутра — УСЬНИК, КЛЕЧКОВО, ДЗБЕНИН, ЛАВЫ, ЖЕКУНЬ, КАМЯНКА, ЛИПЯНКА, ГОВОРОВО, КУНИН, НУРЫ, ВИНЦЕНТОВО, ПОПЛАВЫ, ГРАБУВЕК, ЗАТОРЫ, ПОПОВО КОСЬЦЕЛЬНЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЖИЗНОВО, КУРПЕ ПАСЕКИ, ДАЛЕНЕ ятлӑ чугун çул станцийӗсем. Темиçе участокра пирӗн çарсем НАРЕВ шывӗ çине тухнӑ.

Румынире пирӗн çарсем, малалла куçса пырса, ПИТЕШТИ, КРАЙОВА, РАШИОРИ-ДЕ-ВЕДЕ, ДРЭГЭНЕШТИ хулисене тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ, çав шутра — ВЭЛЕНИ, КОЛИБАШИ, СТЭНИШЛЭВЕШТИ-ОАРЯ, БЫРЛОУ, ИСБОРУ, НЕГРЕНИ, ЗЛОТЕШТИ, ТРИВАЛЯ, БРЭТЭШАНИ, МЭГУРА, ГОГОШАРИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ПЭТРОАЯ, ЛЕУРДЕНИ, КЭЛИНЕШТИ, ГОЛЕШТИ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ.

Сентябрӗн 4-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 44 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапăçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 21 самолетне персе ӳкернӗ.

СЕНТЯБРӖН 6-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 6-мӗшӗнче БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсен НАРЕВ шывӗ çинчи оборонин тӗреклетнӗ пахa пунктне — ОСТРОЛЕНКА хулипе крепоçне штурмласа туртса илнӗ.

ОСТРОЛЕНКА хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем НАРЕВ шывӗн хӗвелтухӑç хӗррине тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ОТСРОЛЕНКА ятлӑ узловой чугун çул станцийӗ, КРУШЕВО, ХЕЛСТЫ, ЖОНСЬНИК, СОКОЛОВО, ЗАМБСКИ-КОСЬЦЕЛЬНЕ, ПОНИКЕВ, ПСАРЫ ятлӑ пысӑк ялсем.

ПРАГАРАН çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем контратакӑсем тунӑ та хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Темиçе хутчен те алӑран-алла куçнӑ ВОЛОМИН хулине каллех пирӗн çарсем йышӑннӑ.

Румынире пирӗн çарсем малалла куçса пынӑ, КЫМПУЛУНГ (БРАШОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре), КАРАКАЛ, АЛЕКСАНДРИЯ, ЗИМНИЧЕ хулисене туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — АЛБОТА, ЦУЦИЛЕШТИ, КОСТЕШТИ, БАБАНЕШТИ, СТРЫМБЕНИ, РЫКА, СУРДУЛЕШТИ, КАЛЕНДЕРУ, ПЕРЕТУ, СУХАЯ ятлӑ пысӑк ялсем тата СУСЕНИ, КОСТЕШТИ, БУРДЯ, МИРОШИ, БАЛАЧИ, БЕУКА, ПАПА, ПЕРЕТУ, БУЗЕСКУ, ЦИГАНЕШТИ, СМЫРДЕАСА, ШОЙМУ, УЛМУЛЕЦ ятлӑ чугун çул станцийӗсем. Пирӗн çарсем тата ТУРНУ-СЕВЕРИН хулине йышӑннӑ, çапла вара Румынипе Югослави хушшинчи чикке тухнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ.

Сентябрӗн 5-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 17 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапăçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 32 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мӗш фронт çарӗсем, наступление вӑйлатса пырса, Остроленка хулипе крепоçне пырса кӗмелли çулсем çине тухнӑ. Тӑшман хытӑ хирӗç тӑрса çапăçнӑ. Умлӑн-хыçлӑн пилӗк хутчен вӑйлӑ контратака тунӑ. Совет чаçӗсем нимӗçсем хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкнӑ та, малалла куçса пырса, кӑнтӑр енчен тата хӗвелтухӑç енчен Остроленка хули урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Паян ирхине пирӗн çарсем тӑшман гарнизонне аркатса тӑкнӑ та Остроленка хулине штурмласа туртса илнӗ. Остроленка хули Нарев шывӗн хӗвелтухӑç енче тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пахa пункчӗ пулнӑ. Остроленка урлӑ шоссе çулӗ каять, çав çулпа нимӗçсем фронта хӑйсен çарӗсене куçарса тӑнӑ. Остроленка хулишӗн пынӑ çапăçура пирӗн çарсем 2.000 гитлеровеца çити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Остроленка хулинчен кӑнтӑртарахра пӗр соединени чаçӗсем нимӗçсен пӗр-пӗринчен татӑлса кайнӑ ушкӑнӗсене Нарев шывӗ хӗррине хӗстерсе лартнӑ та пурне те пӗтерсе тӑкнӑ. Çапăçу хирӗнче тӑшманӑн 300 вилли ытла выртса юлнӑ, çунса кайнӑ 9 танкпа хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑ тӑрса юлнӑ. Тепӗр участокра тӑшман, Нарев шывӗн хӗвелтухӑç хӗрринчи плацдарма хӑйӗн аллинчех тытса хӑварма тӑрӑшса, таттисыпписӗр контратакӑсем тунӑ. Пирӗн танксемпе пехота нимӗçсене флангсенчен пыра-пыра çапнӑ та Нарев шывӗн хӗвеланӑç хӗррине хӑваласа янӑ. Нумай гитлеровец шыва путса пӗтнӗ. Хӑй тӗллӗн çӳрекен 8 тупӑ, 9 бронетранспортер тата 90 автомашина тытса илнӗ. Нарев шывӗн хӗвелтухӑç хӗррине Остроленка хулинчен кӑнтӑртарахри участока тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ.

Пирӗн летчиксем тӑшманӑн каçӑсем патӗнче капланса тӑнӑ çарӗсене штурмланӑ. Пӗр каçӑ патӗнче кӑна 40 автомашина тата горючи тултарнӑ 3 автоцистерна çунтарса янӑ. Сывлӑшри çапăçусенче тата зенитнӑй артиллери нимӗçсен 29 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Висла шывӗн сылтӑм хӗрринче Варшавӑпа юнашар ларакан Прагӑран çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре хаяр çапăçусем пынӑ. Воломин хули темиçе хутчен алӑран-алла куçнӑ. Паян пирӗн çарсем çав нимӗçсен оборонин пахa узелӗ пулса тӑракан хулана каллех туртса илнӗ. Гитлеровецсене пӗр батальона çити пӗтерсе тӑкнӑ. Гусев старши сержантпа Чебыкин рядовой командир пулса ертсе пыракан тупӑсен расчечӗсем тӑшман атакине сирсе янӑ чухне нимӗçсен «Тигр» йышши виçӗ танкне çунтарса янӑ, 2 танкне персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Румынире пирӗн çарсем çаплах малалла куçса пынӑ. Трансильванири Альпы тӑвӗсен йывӑр условийӗсенче кӗрешекен пӗр соединени чаçӗсем Кымпулунг хулине туртса илнӗ. Тепӗр районра пирӗн çӑмӑллӑн куçса çӳрекен чаçсем, çав тери хӑвӑрт малалла куçса пырса, Турну-Северин хулине туртса илнӗ, çапла вара пирӗн çарсем çак участокра Румынипе Югослави чиккине тухнӑ. Нимӗçсен темиçе колоннине аркатса тӑкнӑ. Кӑнтӑр еннелле наступлени туса пыракан совет çарӗсем 40 километр малалла куçнӑ та Александрия хулине, çавӑн пекех тата Дунай шывӗ çинчи Зимниче хулине нимӗçсенчен тасатнӑ.

* * *

Рига хулинчен хӗвелтухӑçнерехре икӗ енӗ те хытӑ персе тӑнӑ тата разведчиксем шыраса çӳренӗ. 12 латыш боецӗ, гварди лейтенанчӗ Гордон командир пулса ертсе пынипе, тӑшманӑн тӗреклетнӗ пунктне сасартӑк вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та çав пункта тытса илнӗ. Нимӗçсем, çав позицие каялла туртса илме хӑтланса, атака тунӑ. Пирӗн боецсем темиçе вунӑ гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, туртса илнӗ позицие хӑйсен аллинчех тытса хӑварнӑ.

* * *

Нимӗçсен 302-мӗш пехотнӑй дивизийӗн тыткӑна лекнӗ командирӗ фон Боген генерал-майор çапла каласа кӑтартнӑ: «Вырӑссем хӑйсен кӑнтӑрти наступленине пигӗ ӑста туса ирттерчӗç. Малтанхи кунсенче пире çавӑрса илесси çинчен эпӗ шутлама та пултарайман. Вырӑссен шухӑшне 30-мӗш армейски корпусӑн тата 6-мӗш армин командованийӗ те тавçӑрса илеймен. Вырӑс çарӗсем, çав тери хӑватлӑн пырса çапса, августӑн 25-мӗш тӗлне пирӗн корпуса аркатса тӑкрӗç, вара корпус юлашкийӗсем вӑрмансем тӑрӑх саланса пӗтрӗç. Çарсене ертсе пырас ӗç пӗтсе ларчӗ. Эпӗ темиçе хутчен те «хурантан» тухса тарма хӑтлантӑм, анчах та кашнинчех çӗнӗ «хурана» лексе пытӑм. Вара çакӑ уçӑнах паллӑ пулчӗ: пирӗн çулсене пурне те татса илнӗ. Августӑн 26-мӗшӗнче эпир пӗр çырмара канма выртрӑмӑр. Вӑрансан çакна куртӑмӑр: йӗри-таврах вырӑссем автоматсемпе тӑраççӗ. Эпир алӑсене çӳлелле çӗклерӗмӗр те тыткӑна парӑнтӑмӑр. Днестр шывӗ çинче темиçе кун хушшинче пулса иртнӗ ӗçе чӑннипех те нимӗç çарӗсене аркатса тӑкни теме пулать. Тыткӑна лекнӗ хыççӑн эпӗ дивизи командирӗсем пулнӑ генералсемпе калаçрӑм. Çакӑ паллӑ пулса тӑчӗ: нимӗçсен 6-мӗш армине вырӑссем ним юлмиччен пӗтерсе тӑкнӑ».

Осоавиахимовецсен ăмăртăвĕ

СССР Осоавиахимӗн Центральный Совечӗн Президиумӗ хӑйӗн организацийӗсен пӗрремӗш çур çулхи ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухнӑ. Осоавиахимовецсем хӑйсен членӗсене çар ӗçне вӗрентес ӗçе чи лайӑх организацилес, халӑха сывлӑшран тапӑнинчен сыхланма хатӗрлес тата ытти тӗлӗшпе те ӑмӑртса ӗçленӗ.

Союзлӑ республикӑсем хушшинче иккӗмӗш хут ӗнтӗ Грузин ССР-ӗ мала тухнӑ. Башкирири осоавиахимовецсем автономиллӗ республикӑсем хушшинче, Хабаровск крайӗ — крайсенчи организацисем хушшинче, Саратов облаçӗ — облаçсенчи организацисем хушшинче, Осоавиахимӑн Мускав хули совечӗ — СССР органӗсене пӑхӑнса тӑракан хуласем хушшинче мала тухнӑ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ пур организацисене те Осоавиахимӑн Центральнӑй Совечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укçан тӳлемелли премийӗсене панӑ. (ТАСС).

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Сентябрь 5 — Сентябрь 15

КОМСОМОЛЕЦСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ВОСКРЕСНИКĔ

Иртнӗ вырсарникун Октябрьски тата Сӗнтӗр районӗсенчи комсомолецсемпе çамрӑксем государствӑна тырӑ турттарса парас тӗлӗшпе воскресник туса ирттернӗ. Октябрьски районри «Чӑваш Обкомӗ» колхоз çамрӑкӗсем 15 лавпа 45 центнер, Буденный ячӗпе тӑракан колхозри çамрӑксем 33 центнер тырӑ леçнӗ. Воскресник Тельман ячӗпе тӑракан, «Хӗрлӗ Çăлтăр» тата ытти колхозсенче те лайӑх иртнӗ. Районри çамрӑксем воскресник кунӗнче пурӗ 896 центнер тырӑ леçсе панӑ.

Сӗнтӗр районӗнчи «Новый путь» (комсомол организацийӗн секретарӗ А. Комиссаров), «КИМ», Ленин ячӗпе тӑракан, «Çӗнӗ Юнга» тата ытти нумай колхозсенчи çамрӑксем те воскресника активлӑн хутшӑннӑ. Комсомолецсемпе çамрӑксен вӑйӗпе государство валли хатӗрлев пункчӗсене 2.105 центнер тырӑ турттарнӑ.

* * *

Сентябрӗн 10-мӗшӗнче государствӑна тырӑ турттарса парас тӗлӗшпе комсомолецсемпе çамрӑксен республикӑри воскресникӗ пулса иртет. ВЛКСМ райкомӗсемпе пуçламӗш организаци секретарӗсен тивӗçӗ — çав воскресника комсомолецсемпе çамрӑксене анлӑн явăçтарасси пулать. Вӑхӑта вӑраха ямасӑр, воскресник ирттерме тӗплӗн хатӗрленмелле, ӑна организованно ирттермелле.

Вунăкунлăха хутшăнса

КУСЛАВККА, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). ВКП(б) Обкомӗ тырпулсене пухса кӗртес, кӗлтесене капана хывас тата вӑрлӑхлӑх курӑксене пухса кӗртес тӗлӗшпе ирттерекен фронтовой вунӑкунлӑха районри колхозсем активлӑн хутшӑнаççӗ.

Фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑх çинчен колхозниксемпе МТС работникӗсем хушшинче ӑнлантарас тӗлӗшпе 320 агитатор тата ВКП(б) райкомӗн 30 уполномоченнӑйӗ ӗçлет. Вӗсем колхозсенчи ӗçпе туртӑм вӑйне тӗрӗс вырнаçтарса усӑ курма пулӑшаççӗ. Колхозсенче тата бригадӑсенче вунӑкунлӑха ирттерес ыйтупа пухусем тата канашлусем пулса иртрӗç. Кашни колхозрах конкретлӑ обязательствӑсем илсе, вӗсене пурнӑçлассишӗн кӗрешме тытӑнчӗç.

— Вунӑкунлӑх,—тет «13 годовщина Октября» колхоз председателӗ Спиридонов юлташ, — пирӗн умма пысӑк задачӑсем лартать. Халиччен эпир тырӑсене кӑнтӑрла кӑна çапнӑ, халӗ кӑнтӑрла та çӗрле те çапатпӑр.

Партин 16 съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозра та кӗлте турттарса капана хывас тата авӑн çапас ӗçе сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне, кӗрхи çӗртме тӑвассине тата государствӑна тырӑ парассине октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех вӗçлеме йышӑннӑ. Илнӗ обязательствӑна пурнӑçлассишӗн фронтри пек хастарлӑн ӗçлеççӗ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Çавапа 0,73 гектар çулать

ЭЛЕК, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех тырпулсене пухса кӗртес ӗçӗн хӑвӑртлӑхӗ ӳсрӗ. «Шуçăм» колхоз, Урицкий, Сталин, Калинин ячӗсемпе тӑракан тата ытти хӑшпӗр колхозсем тырӑ вырса пӗтерчӗç. Кунта халӗ кӗлте кӳрсе капана хывас тата авӑн çапас ӗç хӗрӳллӗ пырать. Пизенерти ВЛКСМ 9-мӗш с'езчӗ ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна тырӑ парас енӗпе лайӑх ӗçлет. Кунта график тӑрӑх 56 центнер леçмелле пулнӑ пулсан, паянхи кун тӗлне 108 центнер леçнӗ. Колхоз çак кунсенчех тырӑ памалли плана тултарать. Ку колхозра çуртырисене вырса пухнӑ çӗрте уйрӑм колхозниксем стахановла ӗçлеççӗ. А. Иванов кӗреплеллӗ çавапа кунне 0,73 гектар çулать. А. Семенова тата Е. Степанова колхозницӑсем те кулленхи нормӑна 150 процент тултараççӗ.

Х. ЛИСИН.

1944 ÇУЛХИ СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ВЫРСА ПУХАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă вырса пухнă	Капана хывнă	Çапнă	Вăрлăхлăх курăксене пухнă
Калинино	99,2	40,8	24,4	24,3
Чурачăк	98,6	61,9	35,5	93,7
Шупашкар	98,3	41,6	35,5	34,4
Çĕрпӳ	97,3	46,4	33,3	77,8
Канаш	97,2	44,0	41,0	57,9
Сĕнтĕрвăрри	95,5	50,5	36,5	24,5
Сĕнтĕр	95,4	41,0	33,6	55,0
Етĕрне	94,5	52,3	29,1	11,3
Красноармейски	94,1	46,7	30,7	53,7
Муркаш	93,8	32,4	26,1	31,2
Элĕк	93,6	32,5	29,2	4,0
Вăрнар	93,3	49,7	37,9	64,7
Советски	91,2	42,2	32,4	59,5
Шăхасан	91,1	39,3	31,4	—
Куславкка	91,0	44,8	34,3	55,9
Октябрьски	89,9	46,2	29,6	80,2
Чкаловски	89,1	43,3	26,5	67,8
Елчĕк	89,1	39,4	26,4	51,8
Ишлей	89,0	45,5	30,7	21,9
Вăрмар	86,7	51,2	34,6	74,2
Тăвай	86,4	36,6	28,4	12,8
Хĕрлĕ Чутай	83,3	42,3	31,9	18,8
Йĕпреç	82,5	43,1	35,4	15,2
Первомайски	81,6	49,2	39,9	4,4
Çĕмĕрле	78,0	62,3	39,2	20,0
Комсомольски	77,3	38,8	25,5	20,7
Пăрачкав	77,1	70,0	39,3	48,6
Шăмăршă	76,6	63,6	39,0	15,1
Улатăр	71,9	51,2	36,2	—
Кувакино	63,3	53,4	37,0	—

Тырпула 99 процент вырса пухнă

ЧУРАЧАК, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑха пысӑк тимлӗхпе хутшӑнчӗç. Вунӑкунлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех ӗç тухăçлăхӗ палӑрмаллах ӳсрӗ. Тырӑ вырса пӗтереймен колхозсем пӗрерӗн кӑна шутланаççӗ. Паянхи кун тӗлне тырӑ вырса пухмалли плана район 99 процент тултарнӑ. Кӗлте кӳрессипе авӑн çапасси те хӗрӳллӗн пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем, уяр çанталӑкпа туллин усă курас тесе, кунӗн-çӗрӗн ӗçлеççӗ.

Юлашки вӑхӑтра государствӑна тырӑ парас ӗç те хӑвӑрт пулса пырать. «Правда», «Победа», Янчеллӑри «Новая сила», «Красная Армия», «Пучах», «Первое Мая» колхозсем государствӑна обязательствӑсем тӑрӑх пур тӗрлӗ культурӑсене те парса татнӑ. Районри нумай колхозсем сентябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне тырӑ парса татассишӗн кӗрешеççӗ.

Анчах та государствӑна тырӑ парас ӗçре района каялла туртакан колхозсем те пур-ха. Ленин, Ворошилов, Сталин тата Буденный ячӗсемпе тӑракан колхозсем графика тултарса пыраймаççӗ. «Совет» колхоз августӑн 25-мӗшӗпе сентябрӗн 5-мӗшӗ хушшинче государствӑна пӗр килограмм тырӑ та леçмен. Çав вӑхӑтрах 25 центнер тырӑ колхозниксене аванс шучӗпе валеçнӗ. Колхоз председателӗ Агеев юлташ: лашасем çителӗксӗр, тесе ларать. Анчах та колхозра 41 лаша пур, ӗçе вӗрентнӗ 20 ӗнепе вӑкӑр пур, вӗсемпе усӑ курмаççӗ. Вӑл çеç те мар, çак колхоз тырӑ леçмелли пунктран мӗн пурӗ те 6 километрта кӑна. Ӗçе пӗлсе организациленӗ пулсан, кунта государствӑна тырӑ парассине тахçанах вӗçлеме май пулнӑ. Анчах çаврӑнăçусӑр председатель Агеев ӗçе вӑраха ярса пырать.

В. КРАСНОВ.

Государствăна тырă парса татаççĕ

КӲКЕÇ, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем, фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑха хастарлӑн хутшӑнса, тырӑ вырас тата государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем парас ӗçе чылай хӑвӑртлатрӗç. «Память Ленина» тата Водопьянов ячӗпе тӑракан колхозсем тырӑ вырса пӗтернӗ, государствӑна та тырӑ парса татнӑ. Уборка пӗтернӗ колхозсен шучӗ кашни кунах ӳссе пырать.

«Крахмал», «Правда», «Малалла», Жданов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсем çак кунсенчех государствӑна тырӑ парса татаççӗ.

Г. ПЕТРОВ.

Государствăна кок-сагыз паратпăр

Шӑхасан районӗнчи колхозсем промышленноçа кок-сагыз туса парас енӗпе чылай çитӗнӳсем турӗç. «Победа» колхоз (председателӗ И. Захаров юлташ) 14 гектар кок-сагыз плантацийӗнчен 120 центнер тымар, 350 килограмм вӑрлӑх туса илчӗ. Кок-сагыз енӗпе ӗçлекен бригадӑн бригадирӗ М. Михайлова юлташ ӗçе тӗрӗс организациленӗ. Кок-сагыз плантацийӗ çинче агротехника кӑтартнӑ ӗçсене вӑхӑтра туса пынӑ: çумкурӑксене çумланӑ, кок-сагыз тымарӗсене апат панӑ, тӑпрана кӑпкалатнӑ. Кок-сагыз вӑрлӑхне кашни кунах пухса пынӑ. Çавӑн пек тӑрӑшса ӗçлесе, И. Алексеева ертсе пыракан звено пӗр гектар кок-сагыз плантацийӗ çинчен тымарне 5 центнер вырӑнне 8,5 центнер, вӑрлӑхне 10 килограмм вырӑнне 25 килограмм туса илнӗ. Çак çитӗнӳшӗн кок-сагыз патӗнче ӗçлекен колхозниксене 130 мӑшӑр резина калуш, 600 мӑшӑр чӑлха, 60 кӗпе валеççе панӑ. Кунсӑр пуçне, колхозниксене валеççе пама 89 пин тенкӗлӗх ытти тӗрлӗ промышленность таварӗсем илеççӗ.

Кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе колхоз председателӗ Захаров юлташ та пикенсех ӗçленӗ. Вӑл кок-сагыз планне ытлашшипех тултарма кок-сагыз бригадине пур майсене те туса панӑ, колхозниксене вӗрентнӗ, пулӑшнӑ.

Кок-сагыз планне ытлашшипех тултарнӑшӑн колхоз председателӗ Захаров юлташ 2500 тенкӗлӗх тавар илет.

Киров ячӗпе тӑракан колхозри кок-сагыз тӗлӗшпе ӗçлекен звеновод Ильина юлташ кок-сагыз тымарӗ туса илмелли плана 222 процент тултарнӑ, государствӑна кок-сагыз тымарне 18 центнер, вӑрлӑхне 58 килограмм панӑ.

Молотов ячӗпе тӑракан колхозри 65 çулхи М. Ильин 183 килограмм кок-сагыз вӑрлӑхӗ пухса панӑ.

Кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе Ӳшанарти Калинин ячӗпе тӑракан колхоз та (председателӗ Игнатьев юлташ) аван ӗçленӗ. Кок-сагыз енӗпе ӗçлекен бригада (бригадирӗ Васильев юлташ) 7 гектар кок-сагыз плантацийӗнчен тымарне 60 центнер, вӑрлӑхне 141 килограмм пухса илнӗ.

Районри колхозсем кок-сагыз туса илмелли плана ытлашшипех тултарнӑ вӑхӑтрах «Березовка» колхоз (председателӗ Степанов юлташ) кок-сагыз çине кирлӗ пек çаврӑнса пӑхман. Ку колхоз 10 гектар çинчен кок-сагыз тымарне 14 центнер, вӑрлӑхне 10 килограмм кӑна туса илнӗ. Кок-сагыз плантацине пӑхса тӑрас вырӑнне выльӑх кӗртсе янӑ.

Пур колхозсен те государствӑна ытларах кок-сагыз туса парассишӗн кӗрешмелле.

А. АНТОНОВ.

Юлса пыракан бригадăсене пулăшни кирлĕ

СЕНТЕРВАРРИ. «Сӗнтӗр-Пуç» колхозра 4 бригада. Чи малти вырӑнта 3-мӗш бригада пырать. Ку бригадӑри колхозниксемпе колхозницӑсем пур ӗçре те хастарлӑ ӗçлеççӗ. Жнейкӑпа ӗçлекен Аркадий Иванов кулленхи нормӑна ирттерсе тултарса пырать. Ӗçе уйрӑм сдельщинапа тӑваççӗ. Çавна май нормӑна ытлашшипех тултарса ӗçлекенсем нумай. Алӑпа тырӑ выракансем Раиса Васильева, Елизавета Кузнецова, Зоя Шумкова, Александра Елизарова, Анна Степанова колхозницӑсем кулленех ӗç нормине 150—200 процент таран тултарса пыраççӗ.

Бригадир Павлов юлташ яланах колхозниксемпе пӗрле хирте ӗçлет. Колхозниксем тӑрӑшса ӗçленине пула, бригада 59 гектар çинчи çуртыррисене вырса пӗтерчӗ. Халӗ пикенсех кӗлтесене капана хываççӗ. Кӗр тыррисене акса пӗтернӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗçне те аван йӗркеленӗ. Фронтри çӗнӗ хыпарсене бригадир хӑй каласа ӑнлантарать. Тырпул пухнӑ вӑхӑтра 5 номер стена хаçачӗ кӑларнӑ. Государствӑна тырӑ памалли пилӗккунлӑх графика пурнӑçласа пырать.

Анчах ӗçе пур бригадӑсенче те тӗрӗс йӗркелемен-ха. Уйрӑмӑнах ку колхозра 4-мӗш бригада (бригадирӗ А. Макаров юлташ) кая юлса пырать. Вӑл правлени хушнисене тӗрӗс пурнӑçласа пымасть. Колхозниксем ӗçе ир тухмаççӗ, хӗвел аначчен кӗреççӗ. Макаров юлташ хӑйӗн ӗçне юлхав туса пынине пула, паянхи кунччен те тырӑ вырса, тырӑ акса пӗтермен-ха. Государствӑна тырӑ памалли графика пурнӑçласа пымасть.

Çавӑн пекех 2-мӗшпе 1-мӗш бригадӑсенче те ӗç дисциплини начар. 2-мӗш бригада (бригадирӗ А. Миронов) кӗртыррисене акнӑ чухне шӑйрӑксем хӑварнӑ. Кунта коммунистсем те пур, анчах ӗçри çитменлӗхсене пӗтерес тесе вӗсем тӑрӑшмаççӗ.

П. КУЗНЕЦОВ.

Вăрлăхлăх хăварнă курăксене пухаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ курӑксене пухма тытӑнчӗç. Паянхи кун тӗлне 157 гектар пухнӑ. Уйрӑмӑнах Шмидт ячӗпе тӑракан колхозра ӗç лайӑх пырать, кунта пурӗ 40 гектар пухмалла, вӑл шутран 30 гектар пухнӑ ӗнтӗ. «Трактор» колхоз 7 гектар çинчен вырса пухнӑ, халӗ кунта клевера шӗкӗлчеме тытӑннӑ. «Мурат», Ульянов ячӗпе тӑракан колхозсенче те 10-шар гектар пуçтарнӑ.

Анчах та «Пролетарий», «Красное Сормово», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем вӑрлӑхлӑх курӑксене пухма тытӑнман. Курӑксем пулса çитнӗ, тӑкӑнма та пултараççӗ. Паха курӑк вӑрлӑхне вӑхӑтра пухса илессишӗн пикенерех ӗçлемелле.

Н. КОНДАКОВ.

Тырпула тĕрĕс шута илмеççĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Паймурзинӑри «Клевер» колхозра тырпулсене шута илес ӗçе начар йӗркеленӗ. Çапнӑ тырра тӗрӗслемен тарасапа виçеççӗ. Тырпула килогрампа виçесси çинчен пачах манса кайнӑ, тырӑ виçнӗ çӗрте кӗрепенкесемпе усӑ кураççӗ. Накладнойсене ӗçкунӗ пӗтнӗ хыççӑн çеç çыраççӗ. Тырпул мӗн чухлӗ çапнине кӑтартакан дневнике те тӗрӗс çырса пымаççӗ. Çапла, пӗр кунхи дневник тӑрӑх, 30 пӑт тырӑ çапса илни курӑнать. Çав дневник тӑрӑхах, çапнӑ тырӑран 26 пӑт тӑккаланса пӗтнӗ.

Колхоз тыррине расходланӑ çӗрте те шут ӗçне тивӗçлипе йӗркелемен. Темиçе центнер тырӑ акнӑ. Анчах ун пирки распоряженисем çырман. Çавӑн пекех государствӑна обязательнӑй йӗркепе тырӑ пани çинчен те распоряженисене вӑхӑтра çырса пымаççӗ.

Шут ӗçне çавӑн пек начар йӗркелени тырпула пӑхса усрас ӗçе чӑрмавсем нумай кӳрет. Анчах та колхоз председателӗ Григорьевпа счетовод Петров шут ӗçне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшмаççӗ. Вӗсем тырпулсене хураллас ӗçе те тивӗçлипе йӗркелемен.

Я. СИГАЕВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ

(СЕНТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ ИЛНĔ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Вăрнар	1
Сĕнтĕрвăрри	2
Шупашкар	3
Çĕрпӳ	4
Шăхасан	5
Советски	6
Красноармейски	7
Муркаш	8
Куславкка	9
Ишлей	10
Калинино	11
Октябрьски	12
Сĕнтĕр	13
Вăрмар	14
Чурачăк	15
Элĕк	16
Етĕрне	17
Канаш	18
Улатăр	19
Хĕрлĕ Чутай	20
Çĕмĕрле	21
Йĕпреç	22
Тăвай	23
Елчĕк	24
Комсомольски	25
Первомайски	26
Чкаловски	27
Пăрачкав	28
Шăмăршă	29
Кувакино	30

СССР Наркоминделĕнчи пресс-конференци

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, СССР Наркоминделĕнче пресс-конференци пулса иртнĕ. Унта ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов совет пичечĕпе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсене Совет Правительстви Болгари Правительствине панă нотăна паллаштарнă. Çав нотăна сентябрĕн 5-мĕшĕнче Болгари Совет Союзĕнчи посланникне Стаменов господина панă.

Молотов юлташ пресс-конференцие журналистсен ыйтăвĕсене ответсем панă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Шапиро господин çапла ыйтнă: Совет Правительствин çак нотине Великобританипе США правительствисем пĕлеççĕ-и? — тенĕ. Молотов юлташ çапла каланă:

«Çак нотăна Болгари посланникне паричченех ун çинчен Британи послов Керр господина тата США послов Гарриман господина каласа паттăм»,— тенĕ.

«Таймс» журналăн корреспонденчĕ Лотерфах господин çапла ыйтнă: «Совет Союзĕ Болгари умне мĕнле требованисем лартрĕ?» — тенĕ. Молотов юлташ çапла каланă: «Болгари правительствине çак ыйту çинчен кирлĕ нота панă. Çав нотăра [illegible]»,— тенĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Лоренс господин çапла ыйтнă: «Румыни делегацийĕпе перемири çинчен калаçасси мĕнле пырать?» — тенĕ. Молотов юлташ çапла каланă: «Румыни делегацийĕ калаçма [illegible] тăтăмашкăн малтан хатĕрленсе çитес пулать, калаçма хатĕрленсе вара Совет Союзĕпе çес мар, [illegible] американецсем те килет»,— тенĕ.

Америкăри радио саракан компании корреспонденчĕ Магилов господин çапла ыйтнă: Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи калаçусем мĕнле пыраççĕ? — тенĕ. В. М. Молотов юлташ çапла каланă: Финляндипе калаçма [illegible], анчах та часах Совет Союзне Финлянди делегацийĕ килмелле. «Финлянди правительстви делегаци яма ирĕк пама ыйтрĕ,—тенĕ Молотов юлташ.—Совет правительстви Финлянди делегацине Мускава килме ирĕк пачĕ», — тенĕ.

Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусене татни çинчен

Болгари Правительстви 1941 çулта вăрçă ĕçсене фашистла Германие çыхăнса [illegible]

[illegible] апрелĕн 17-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Болгари Мускаври посланникне Стаменов господина нота пачĕ. [illegible]

[illegible] Болгари Правительстви Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра [illegible]

Совет Правительствин нотинче малалла çапла каланă:

«Ĕç çавăн пек пулни Совет Союзĕпе Болгари пĕр-пĕринпе йĕркеллĕн çыхăнса тăнипе пĕрех те килĕшсе тăмасть, çакна урăх чăтса тăма çук. Совет Правительстви Болгари Правительствине çапла тума питĕ хытă сĕнет: гитлерла Германие Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Болгари территорийĕпе тата унăн порчĕсемпе усă курма халех чарса лартмалла», тенĕ.

Болгари Правительстви апрелĕн 24-мĕшĕнче янă хăйĕн нотинче Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра нимĕçсем Болгари территорийĕпе, порчĕсемпе тата аэродромĕсемпе усă курнине каллех тунма хăтланчĕ, çавăн пек фактсене эпир тĕрĕслĕпĕр, текелесе суйрĕ. Совет Правительстви апрелĕн 26-мĕшĕнче Болгари Правительствине ответлесе тепĕр нота ячĕ. Çав нотăра вăл Варнăри совет консульствине çĕнĕрен уçма, çавăн пекех тата Бургаспа Дунай çинчи Рущук хулисенче совет консульствисем туса хума сĕнчĕ. Çапла туни Совет Союзĕн представителĕсене, Болгарин представителĕсемпе пĕрлех, фактсене вырăнтах тĕрĕслеме май панă пулĕччĕ тата вăл малашне те кирлĕ чухне çавăн пек тĕрĕслеме май парса тăнă пулĕччĕ, терĕ.

Болгари Правительстви майăн 6-мĕшĕнче янă хăйĕн нотинче Совет Правительствин сĕнĕвĕ пирки хăйĕн сăмахне тÿрех каласа памарĕ, вăл Болгарире совет консульствисем уçассине Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи экономикăллă çыхăнусене, вăрçă пирки татăлса кайнăскерсене, çĕнĕрен пуçласа ярассипе çыхăнтарма хăтланчĕ. Болгари Правительстви хăйĕн нотинче çапла каларĕ: Совет Правительстви Варнăра, Бургасра тата Рущукра совет консульствисем уçасшăн пулнине эпир Болгарипе Совет Союзĕ хушшинчи экономикăллă çыхăнусене çĕнĕрен сыпăнтарса янă хыççăн çеç ырă кăмăлпа пăхса тухма хатĕр, терĕ.

Болгари Правительствин çав позицине çапла хаклама тиврĕ: Совет Правительстви тивĕçлипе ыйтнине Болгари Правительстви пурнăçлама килĕшмест иккен, вăл Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Германие малашне те пулăшса тăрасшăн иккен, тесе хаклама тиврĕ. Совет Правительстви майăн 9-мĕшĕнче янă хăйĕн нотинче Болгари Правительствине çавăн çинчен каласа пачĕ, Болгари Правительстви консульствăсем уçас ыйтăва Болгарипе Совет Союзĕ хушшинче çĕнĕрен суту-илÿ çыхăнăвĕсем пуçласа ярассипе çыхăнтарма хăтланни — пушă япала пулса тăнине кăтартса пачĕ. Çакна пурте пĕлсе тăраççĕ: консульствăсем вĕсем суту-илÿ ĕçĕсене туса тămаççĕ.

Совет Правительстви хăйĕн нотинче Варна хулинче совет консульствине çĕнĕрен уçма тата Бургаспа Рущук хулисенче совет консульствисем туса хума ыйтнине пурнăçа кĕртме тепĕр хут сĕнчĕ.

Апла пулин те, Божилов правительстви, Совет Правительстви консульствăсем уçма сĕнни пирки тÿрех калама килĕшмесĕр, [illegible]

Болгари Правительстви майăн 15-мĕшĕнче янă хăйĕн нотинче каллех малтан суту-илÿ тĕлĕшпе çыхăнма кирли çинчен [illegible]

[illegible]

ма шутлакан государство вырăнне хурса, унпа çыхăну тытса тăма пăрахмалла пулать, тесе шутлать».

Болгари Правительстви Совет Правительствин çав ноти çине ответ парассипе пур майсемпе те тăсса пычĕ. Божилов правительствине улăштарнă Багрянов правительстви, совет консульствисене уçас тата ССР Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăра гитлерла Германие кирек мĕнле майпа та пулăшса тăма пăрахас ыйтăва татса парассине чарса тăрса, малалла маневрсем туса пынă.

Июлĕн юлашки кунĕсенче кăна, Хĕрлĕ Çарăн çуллахи наступленийĕ тата союзниксен çарĕсен Франципе Италири ăнăçлă операцийĕсем Германие пĕтсе ларасси патне илсе пырса тăратсан, Багрянов правительстви юлашкинчен çапах та (июлĕн 29-мĕшĕнчи нотăра) Совет Союзĕн Варна хулинчи консульствине çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнмалла тума сăмах вĕççĕн килĕшрĕ, çавăнпа пĕрлех Бургаспа Рущук хулисенче совет консульствисене уçассине паллă мар вăхăта хăварчĕ. Багрянов правительстви хăйĕн нотинче, Болгарин, вичĕ енлĕ пактпа çыхăннăскерĕн тата СССР тĕлĕшпе «нейтралитет политикине тытса тăраканскерĕн», уйрăмлăхĕсене çине тăрсах палăртса, çапла каланă:

«Болгари Правительстви, хăй йышăннă тата халĕ ĕçре тытса пыракан политикăна кура, Совет Союзĕпе туслă çыхăнусем тăвас тата çав çыхăнăва тытса пырас енĕпе консульствăсем уçнипех тума пултарнинчен нумай ытларах утăм турĕ тесе шутлать. Анчах Болгарин халиччен-хи тата хальхи Правительстви, Совет Союзĕпе калаçусем туса ирттернĕ хыççăн пулса тăнă лару-тăрăва кура тата Совет Правительстви Варнăпа Бургас тата Рущук хулисенче консульствăсем уçма кăмăлланине кура, çавăн пек консульствăсем уçни Болгари Правительстви тытса пыма ĕмĕтленекен политикăна татах та ытларах пулăшма пултарать пулсан, вăл çапла тума май пур тесе шутлать: çав ĕçе ăна, сăмахран, Варна хулинчи консульствăна çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăннинчен пуçласа, майĕпен пурнăçа кĕртсе пыма пулать пулмалла. Варнăри консульство ĕçлекен район вара Бургаспа Рущук районĕсем патне çитиех сарăлма пултарнă пулĕччĕ. Çав хуласем Варнăран ытлашши аякра тăманнине кура тата Болгари Правительстви Совет Союзне парса тăракан тата малашне те парса тăма шутлакан пулăшăва кура, Варнăри консульство хăйĕн ĕçĕсене туса пынă чухне йывăрлăхсем тÿсмĕ».

Анчах çав вăхăт тĕлне гитлерла çарсене хирĕç туса пыракан вăрçă ĕçĕсем Болгари чиккисем патнех çывхарса пычĕç, çавăнпа та вара Германи çарĕн командованийĕ, Болгари Правительстви хÿтĕлесе тăнипе, хăйĕн çарĕсен кăнтăрти группировкине пулăшас шутпа, Болгари территорийĕпе чылай анлăнрах усă курма тытăнчĕ. Çакăн пек çĕнĕ условисенче Болгари гитлерла Германипе çыхăнса тăрассине пĕтĕмĕшпех татсан кăна ССР Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăра Германие кирек мĕнле пулăшу парассине те чарса лартма май пулнă.

Çавна май Совет ĕçĕсен поверенныйĕ августăн 12-мĕшĕнче Совет Правительстви ячĕпе Болгарин премьер-министрне Багрянова çакăн пек пĕлтернĕ:

«Болгарире совет консульствисем уçас ыйту питех те вăраха кайнине пула тата вăрçă лару-тăрăвĕ улшăннине пула, консульствăсем çинчен тăракан ыйту хăйĕн кирек мĕнле пĕлтерĕшне те çухатрĕ. Болгари пĕтĕмпех путланса ларассинчен мĕнле те пулин хăтăлма шутлать пулсан, хальхи вăхăтра Болгари Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен кăна ыйту тăма пултарать. Совет Правительстви Болгари Правительствинчен: — вăл Германипе тытакан çыхăнăва татма хатĕр-и? тесе ыйтать. Совет Правительстви çак ыйту çине ответ парасса кĕтет тата Болгари Правительстви ку ĕçе вăраха ямĕ тесе шанса тăрать».

Багрянов правительстви, гитлерла Германипе тытакан çыхăнăва татма кăмăлламасăр тăрса тата хăй Германие пулăшу парса тăнине пытарма тăрăшса, Болгари «пур енчен те нейтралитет тытать» тесе пĕлтерчĕ, çапла вара хăй çĕршывĕн халăхне тата тĕнчери обществăллă шухăша улталама хăтланчĕ.

Фактсем çакна кăтартса пачĕç: Болгарин «нейтралитечĕ», тĕрĕссипе, гитлерла Германие паракан пулăшăвăн çĕнĕ форми кăна пулса тăрать. Болгари Правительстви Германи командованине унăн арканса хавшанă çарĕсене тата çар суднисен экипажĕсене Болгарин «нейтральнăй» территорийĕ çинче пытанса юлма пĕтĕмĕшпех май пачĕ кăна мар, вăл çавăн пекех тата Болгари çĕрĕ урлă Румынине, Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе Германи çарĕсем поражени хыççăн поражени тÿснĕ çĕре, резервсем куçарса тăма та нимĕçсене май туса пачĕ.

Çавăн пирки августăн 30-мĕшĕнче Совет Союз ĕçĕсен София хулинчи поверенныйĕ Болгари Правительствине çакăн пек нота пачĕ:

«Совет Правительстви хушнипе çакăн çинчен пĕлтеретĕп: тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă даннăйсем тăрăх, Болгари Правительстви нимĕç çарĕсене Румыни территорийĕ çине, совет çарĕсем тăракан çĕре тата вĕсем Румыни территорине нимĕç çарĕсенчен тасатса пынă çĕре, халĕ те Болгари территорийĕ урлă куçарса тăма ирĕк парать. Совет Правительстви Болгари Правительствин çав утăмне Совет Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăра нимĕçсене тÿрремĕнех пулăшни вырăнне хурса хаклать. Совет Правительстви Болгари Правительствине хăй территорийĕ урлă нимĕç çарĕсене Румыни территорийĕ çине каçарса ярассине халех чарма хушать».

Совет Правительствин çав заявленийĕнчен Болгари Правительстви хăй валли кирлĕ выводсем тумарĕ тата хăйĕн территорийĕ çинче нимĕç çарĕсене пытарса тăма пăрахмарĕ. Совет Союзĕн тата Болгарин çÿлерехре илсе кăтартнă нотисем çакна çирĕплетсе параççĕ: Болгарин ертсе пыракан ушкăнĕсем гитлерла Германипе тытакан çыхăнăва татма шутламан, шутламаççĕ те.

Болгарин сентябрĕн 3-мĕшĕнче тунă Муравиев пуç пулса тăракан çĕнĕ Правительстви гитлеровецсемпе çыхăну тытма пăрахас вырăнне, хăйĕн декларацийĕнче «нейтралитет» политикине малалла тытса пыма шутлани çинчен пĕлтерчĕ. Çав политика вăл, тĕрĕссипе, Совет Союзне тата демократиллĕ ытти çĕршывсене хирĕç туса пыракан вăрçăра тÿрремĕнех Германие пулăшу парса тăнине пĕлтерет.

Болгарин çав политикине, вăл Германи лагерьне тăрса, тĕрĕссипе, Совет Союзне хирĕç вăрçă вăрçни вырăнне хурса хакланисĕр пуçне, Совет Правительстви урăхла нимĕнле те хаклама пултарайман, вара хăйĕн сентябрĕн 5-мĕшĕнчи нотинче Совет Правительстви çапла пĕлтерчĕ: «Совет Правительстви Болгарипе текех çыхăну тытса тăма май çук тесе шутлать, Болгарипе мĕнпур çыхăнусене пурне те татса, çапла калать: чăннипе унччен-ех Совет Союзне хирĕç вăрçса тăнă Болгари кăна мар Совет Союзне хирĕç вăрçса тăрать, паянтан пуçласа Совет Союзĕ те Болгарие хирĕç çавăн пекех вăрçăллă лару-тăрура пулать».

Çапла вара Болгарин пуç пулса тăракан ушкăнĕсем, гитлерла Германипе вăрçăра пĕрле пулас çул çине тăрса, Болгари халăхне, унăн нациллĕ тĕп интересĕсене пăхса тăмасăр, малтан Англипе США-на хирĕç, унтан вара Совет Союзне хирĕç, Болгарие ирĕке кăларассишĕн хăйĕн юнне тăкнă тăванла вырăс халăхне хирĕç вăрçа туртса кĕртрĕç.

Гитлерла Германипе хăйне ирĕксĕрех çыхлантарса лартнă союза татмашкăн тата хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕпе нациллĕ чыслăхне çĕнĕрен ура çине тăратмашкăн Болгари халăхĕ хăйĕн вăйне тупма тивĕçлĕ.

СССР НАРКОМИНДЕЛĔН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

Совет Союзĕ хăйне Болгарипе вăрçакан çĕршыв тесе шутлани çинчен ют çĕршывсенче мĕн калаççĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ Рендел Нил çапла калать: Совет Союзĕ хăйне Болгарипе вăрçакан çĕршыв тесе шутлани çинчен пĕлтерни (ун çинчен Англи правительствине малтанах пĕлтерсе хунă)—пурнăçпа çыхăнса тăракан политика ĕçĕ пулса тăрать, çав политикăна пула халь лару-тăру уçăмлă пулса тăрĕ. Болгари тĕрлĕ еннелле пăркаланассине пĕтерсе лартнă. Болгарин Германипе çыхăнма пăрахмалла, Германи çарĕсене хĕçпăшалсăрлантармалла, хăй тытса илнĕ территорисене каялла тавăрса памалла.

«Таймс» хаçатпа «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕсем Совет Союзĕ хăйне Болгарипе вăрçакан çĕршыв тесе шутлама йышăннине пĕтĕмпех ырлаççĕ. «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: «Росси хăйне Болгарипе вăрçакан çĕршыв тесе шутлани Болгарин икĕ правительстви те — Багрянов ертсе пыни те, Муравиев ертсе пыраканни те — ирсĕр политика йышăнса тăнинчен килнĕ. Хальхи вăхăтра, уйрăмах та Болгари Германие пулăшса тăнине шута илсен, Болгари правительствине каллех «тулли нейтралитет» йышăнса тăни çинчен пĕлтерме памалла пулман».

«Йоркшир пост» хаçат çапла çырать: «Ытти союзниксем вырăссем тунă ĕçе ырлĕç, мĕншĕн тесессĕн вăл ĕç хальхи пăтранчăк лару-тăрăва пĕтерсе лартать».

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радиостанципе Сан-Францискори радиостанци Совет правительствин Болгари правительствине янă нотине панă. Нью-Йоркри радиостанци çапла каланă: Совет Союзĕ Болгарипе вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернине американецсем политикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç тесе хаклаççĕ. «Халĕ ĕнтĕ, — тенĕ радиопередачăра, — гитлеровецсен Кăнтăр-хĕвелтухăç Европари ĕçĕсем пĕтĕмпех пĕтсе лармалла. Совет Союзĕн çак ĕçĕ союзниксем пурте пĕр пек шухăшланине питĕ лайăх кăтартса парать».

БОЛГАРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Софирен пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕсем Румынирен Болгари территорине чакаççĕ, вĕсем унта хăйсен çăмăл хĕçпăшалĕсемпе чакаççĕ. Çарсене чугун çулсемпе тата шоссе çулĕсемпе турттарса пыраççĕ. Германин София районĕнче вырнаçнă штабĕсем хăйсен вырăнĕнчех юлаççĕ.

Августăн 31-мĕшĕнче София хулине Германи çарĕсем чылай пынă, вĕсем çăмăл артиллери илсе пынă. София хулинче вĕсем хăйсене уйăрса панă çуртсенче вырнаçнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Черногорипе Санджакра Югославин наступлени тума пуçланă чаçĕсем çав территорие тăшмантан ăнăçлăн тасатса пыраççĕ. Македонире, Прешово секторĕнче, болгарсен оккупациллĕ пысăк вăйĕсем, каялла чакакан нимĕçсене хÿтĕлес тесе, ирĕклĕх çарĕн чаçĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Питĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Прилеп хулипе Велес хули хушшинчи тата Градешко хулипе Велес хули хушшинчи çулсем çинче нимĕçсен икĕ колоннине аркатса тăкнă. Нимĕçсен 4 танкне тата 6 грузовикне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 150 вилли выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Слободна Югославия» ятлă радиостанци Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернине панă. Çав пĕлтерÿре Югославин нимĕçсем усă куракан çулйĕрĕсене йĕркерен кăларни çинчен тĕплĕн каланă. Ирĕклĕх çарĕ ăнăçлăн кĕрешнине пула, нимĕç çарĕсен тылĕнчи транспорт çыхăнăвĕ нумай пăсăлнă.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ ÇАРĔ ÇАПĂÇНИ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Греци халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем хĕснипе нимĕçсем Лидорики хулинчен тухса кайнă. Тăшман Амфисса еннелле чакнă. Лидорики секторĕнче халăхăн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Каруда-Элато районне ирĕке кăларнă.

СЛОВАКИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаксен Лондонри çар ушкăнĕсем илнĕ хыпарсем тăрăх, Хĕвелтухăç Словакире Прешов хули районĕнче Чехословаки патриочĕсемпе нимĕçсен оккупациллĕ çарĕсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кошице хули патĕнчен Прешов хули çине наступлени туса пыракан нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă. Хĕвеланăç Словакири Ваг шывĕ улăхĕнче çапăçусем пĕрре нимĕçсем майлă, тепре Чехословаки патриочĕсем майлă пулса пыраççĕ. Жилина хулинчен кăнтăртарахри Стречно хули районĕнче, çавăн пекех тата Жилина хули районĕнче те нимĕçсен танксем пулăшса пынипе хĕссе пыракан пехота чаçĕсене Чехословаки патриочĕсем чарса пыраççĕ. Люченец хули çывăхĕнче венгерсен бронетанковăй чаçĕсен атакине сирсе янă.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германин информаци бюровĕ паян çапла пĕлтернĕ: Словаки президенчĕ Тисо Чатлош генерала оборона министрĕ вырăнĕнчен тата словаксен çарĕн главнокомандующийĕ вырăнĕнчен кăларнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословакири çар влаçĕсен пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерÿре çапла калана: Жилина çывăхĕнче оборонăра тăрса çапăçса, Чехословаки патриочĕсем Врутки тата Нитра хулисенче Германин 27 танкне пĕтерсе тăкнă. Хальхи вăхăтра Трштеник, Лученец тата Левоча хулисемшĕн çапăçаççĕ. Çав хуласем 1938 çултанпа венгерсен аллинче тăраççĕ. Тренчинран çурçĕртерехре Шкодăн Дубницири çар заводĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Чех рабочийĕсем çав заводăн хуралне хирĕç çапăçаççĕ. Завод çунать.

Тăшманăн йышлăрах вăйĕсемпе çапăçнă хыççăн Чехословаки патриочĕсем Братислава [illegible]

Франципе Бельгири тата Италири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калана:

Союзниксен çарĕсем сентябрĕн 5-мĕшĕнче Брюссельпе Антверпен секторне тăшмантан тасатса пынă. Унтан хĕвеланăçнерехре союзниксен танковăй чаçĕсем Гент хулин кăнтăр енчи хĕррине çитнĕ. Союзниксен çарĕсем Сомма шывĕнчен çурçĕрелле ăнăçлăн куçса пыраççĕ, сентябрĕн 5-мĕшĕнче каçхине Эр-сент-Омер линине çитнĕ. Ытти чаçсем, Булонь хулинчен айккипе иртсе кайса, Гин вăрманĕ патне çитнĕ. Кăнтăртарахра союзниксен Бельги тăрăх куçса пыракан çарĕсем Шарлеуа тата Намюр хулисене ирĕке кăларнă. Динан тата Живе хулисен районĕнче Маас шывĕ урлă каçса кайнă.

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Голландири тата Хĕвеланăç Германири аэродромĕсене, транспорт колоннисене тата чугун çул объекчĕсене атакăланă. Тăшманăн 143 самолетне çĕр çинче пĕтерсе тăкнă, 28 самолетне сывлăшри çапăçусенче персе ÿкернĕ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ГОЛЛАНДИПЕ ЛЮКСЕМБУРГ ТЕРРИТОРИНЕ КĔРСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Голланди премьер-министрĕ Гербранди сентябрĕн 4-мĕшĕнче каçхине Голланди халăхне радиопа чĕнсе каланă, вăл союзниксен çарĕсем Голланди территорине кĕрсе кайни çинчен каланă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Люксембург премьер-министрĕ сентябрĕн 5-мĕшĕнче ирхине радиопа тухса каланă чухне çапла каланă: союзниксен çарĕсем Люксембург çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕç, тенĕ.

БЕЛЬГИЕ ГРАЖДАНЛА ĔÇСЕНЕ ТУСА ТĂРАКАН БЕЛЬГИ ДЕЛЕГАЦИЙĔ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕнче Бельгие гражданла ĕçсене туса тăракан Бельги делегацийĕ çитмелле. Тата темиçе кунтан Бельги правительстви те Бельгие куçать.

Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Жерар генерала Бельгин шалти мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ пулма лартнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италин хĕвелтухăç çыранĕпе наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсене пулăшса пырса, Англи карапĕсем тăшманăн Римини районĕнчи батарейисене, транспортне тата çарĕсене вăйлăн пенĕ. 800 снаряд ытла персе янă. Тăшман хытă хирĕç тăнине пăхмасăрах, 8-мĕш арми чаçĕсем Конка шывĕ районĕнче тăшмана тапăнма тунă укрепление асăрхаттăн тата сулахай флангри сăртлă вырăнта малалла куçнă.

5-мĕш арми Флоренци хулинчен хĕвеланăçнелле куçса пырать.

Кăнтăр Францире 7-мĕш арми чаçĕсем Сона шывĕн улăхĕпе хăвăрт малалла куçса пыраççĕ. Тăшман вăйлах хирĕç тăмасть. Сона шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре Америка çарĕсем Монревель районĕнче малалла куçнă.

Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, Кăнтăр Францире çапăçма пуçланăранпа 65.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Адриатика секторĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. 8-мĕш арми чаçĕсем тăшмана Корианори сăртлă вырăнта хăйсен позицийĕсенчен хăваласа кăларнă. Кориано хули тавра тата хулара хăйĕнче те вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

5-мĕш арми, Флоренци хулинчен хĕвеланăçнелле малалла кайса, Альтопашио хулине йышăннă. 5-мĕш арми патрулĕсем Лукка хулине кĕрсе кайнă. Флоренци хулинчен çурçĕртерехре Англи çарĕсем малалла куçса пыраççĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем активлăн кĕрешеççĕ.

Францире 7-мĕш армин малти чаçĕсем Сона шывĕпе Швейцари чикки хушшинче темиçе тĕлте малалла кайнă. Сона шывĕн улăхĕнче хăвăрт малалла куçса пыраççĕ. Америка çарĕсем Луан тата Лон-ле-Сонье ятлă чугун çул узелĕсене йышăннă. Сона шывĕн улăхĕнче çурçĕрелле куçса пыракан француз çарĕсем Клюни тата Ле Вилла хулисене тытса илнĕ, халĕ Шалон-сюр-Сон хули патнелле çывăхарса пыраççĕ.

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсем тăшманăн Çурçĕр Италири тата Францири çулйĕрĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Будапешт çывăхĕнчи чугун çул кĕперĕсене тапăннă.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ЕВРОПАРИ ВĂРÇĂ МАЛАШНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫРАССИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ Холкинс çапла çырать: нимĕçсен Хĕвелтухăç фронтĕнчи çарĕ Хĕвеланăçĕнчи çарĕнчен пилĕк хут вăйлăрах. Апла пулин те, тет малалла Холкинс, нимĕçсем çав-çавах хăйсен Хĕвелтухăç фронтĕнчи çарне çĕнĕ вăйсем парса тăраççĕ, çав вăйсене вĕсем Норвегирен тата Голландирен куçарса каяççĕ. Хĕвеланăçĕнче нимĕçсен нимĕнле резервсем те çук пулмалла. Малалла Холкинс союзниксен пĕр питех те паллă представителĕ калани çинчен çырать. Çав представитель çапла шутлать: Германи халĕ хăйĕн оборонине урăхла йĕркелеме пултарайрас çук. Акăлчансемпе американецсем малалла куçса пырасси союзниксем хăйсен малалла каякан çарĕсене вăхăтра горючи тăратма пултарнинчен килет. Нимĕçсен Хĕвеланăçĕнчи çарĕнче халĕ 500.000 çын шутланать, унсăр пуçне тата 200.000 çын — çар ĕçне начар пĕлекен новобранецсем пур.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем сентябрĕн 5-мĕшĕнче тăшманăн Рейн облаçĕнчи Карлсруэ, Штутгарт тата Людвигсхафен хулисенчи объекчĕсене тапăннă.

ГЕРМАНИ ЗАВОЧĔСЕН ОБОРУДОВАНИНЕ ЭЛЬЗАСРАН ГЕРМАНИЕ КУÇАРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар информацийĕн бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи предприятийĕсене, сăмахран, Крупп завочĕсене тата Гакенседерăн акционерла обществин авиаци завочĕсене, Рейн облаçĕ çине бомбăсем пыра-пыра пăрахнă пирки Эльзаса куçарнă пулнă. Халĕ вĕсем унта пачах ĕçлеме чарăннă, вĕсем хăйсен оборудованине Германие турттарса каяççĕ. Тата çапла пĕлтереççĕ: Рейн облаçне каякан çулсем çинче халь пĕр йĕрке те çук, мĕншĕн тесен вĕсем эсэсовецсен грузовикĕсемпе тулса ларнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇАРАТСА ПУХНА ПУРЛĂХА ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ ПЫТАРМА ХĂТЛАНАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер Германийĕ пĕтес патне çывхарса пынине çакă та лайăх кăтартса парать: фашистсен пуçлăхĕсем хăйсем çаратса пухнă пурлăха халь Германирен хăрушсăртарах вырăна илсе кайма васкаççĕ.

Гитлеровецсен пуçлăхĕсем хăйсен ылттăнне Стамбулра, Бернра тата Мадридра, юлашки вăхăтра тата Стокгольмпа Лиссабонра та сутма хăтланаççĕ.

Çапла шутлаççĕ: гитлеровецсем Европари тĕрлĕ рыноксенче ылттăн сутса тупнă укçана Аргентина укçипе улăштараççĕ те Аргентинăна ăсатаççĕ. Юлашки вăхăтра Аргентинăра Германирен янă укçа питĕ нумай пухăннă.

НИМĔÇСЕН САМОЛЕТ-СНАРЯЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПĂНМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, самолет-снарядсем Англие тапăнма пăрахнă. Информаци министерстви çапла калать: Çурçĕр Франципе Бельгири вăрçă ĕçĕсене пу- [illegible]

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ ПАРИЖ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Париж хулине самолет-снарядсемпе пеме тытăннă. Чи малтанхи самолет-снарядсем сентябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине Париж районĕнче Сена шывĕн бассейнне ÿкнĕ. Сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

ГЕРМАНИН РУМЫНИРИ ПОСЛАННИКĔ КИЛЛИНГЕР ХĂЙНЕ ХĂЙ ПЕРСЕ ВĔЛЕРНĔ

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Румынин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Бухарестра Германи посланникĕ пулса ĕçленĕ Киллингер тата унăн секретарĕ пулса ĕçленĕ Петерсон хăйсене хăйсем персе вĕлернĕ.

Хаçатра пичетленсе тухнă заметкăсем тăрăх

„Культура“ колхоз мĕншĕн юлса пырать?“

Кăçал августăн 11-мĕшĕнче пирĕн хаçатра çакăн пек ятлă заметка пичетленсе тухрĕ. Вăл заметкăра Комсомольски районри «Культура» колхоз председателĕ А. Козлов тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе организацилес тата ертсе пырас тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлени, çавăн пирки колхозри ĕç дисциплини япăхланса кайни çинчен çырнăччĕ.

ВКП(б) Комсомольски райкомĕн секретарĕ Абакумов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. «Культура» колхоз председательне Козлова ĕçрен кăларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТРСЕМ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ХУЛАСЕНЕ ТАВРĂНАÇÇĔ

Ирĕке кăларнă хуласене 26 театр таврăннă. Çывăх кунсенчех Минск хулине белоруссен оперăпа балет театрĕ таврăнать, вăл юлашки вăхăтра Коврово хулинче ĕçленĕ. Çак кунсенче Киеври государство опери ĕçлеме тытăнать, вăл Украина столицине Иркутск хулинчен таврăннă. Пĕтĕмĕшпе илсен, Украинăри театрсем [illegible]

[illegible] атрĕсем, хăйсен хулисене таврăнма хатĕрленеççĕ.

Каялла таврăннă театрсенчен пысăк пайĕ çĕнĕрен тунă çуртсенче е юсаса майлаштарнă çуртсенче ĕçлеме тытăннă. Ирĕке кăларнă хуласенчи халăхсем темиçе вунă çĕнĕ пьесăсемпе, пуринчен ытла Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă пьесăсемпе [illegible]

МУЗЫКА ИНСТРУМЕНЧĔСЕНЕ ЫТЛАРАХ ТУМА ПУÇЛАÇÇĔ

Пирĕн çĕршыври музыка промышленноçĕн чи пысăк предприятийĕсем кăçал пианинăсем, купăссем, баянсем тата ытти инструментсем ытларах туса кăларма пуçлаççĕ. 1945 çулта РСФСР вырăнти промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕн музыка фабрикисем хăйсем туса кăларакан [illegible]

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

сентябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа

КУНСЕРЕНЕХ

документальнăй çĕнĕ фильм

«СЕВАСТОПОЛЬШĔН ÇАПĂÇНИ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре. [illegible]

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 3. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ял хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00676. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59Х47 п. л. Тираж 16.000 экз.